Шкул юбилейĕ

Пĕлӳ тĕнчине пысăк утăм тăвасси çăмăл пулман

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте).

И.Я. Яковлев шкул пурнăçĕпе кăсăкланнă май унăн ĕç-хĕлне хушма çĕнĕлĕхсем кĕртсех тăнă. Вăл шкул сачĕ тата ял хуçалăх сăнав участокĕ йĕркелеме палăртнă. Шкулта вĕренекенсем валли атă-пушмак, столяр ĕçĕн класĕсене уçнă.

1901 çулта Турай училищин ĕçĕ-хĕлĕ улшăнать, çапла вара икĕ класлă ултă çул вĕренмелли вĕрентӳ учрежденийĕ пулса тăрать. 1902-1903 çулсенче шкулăн çĕнĕ çуртне çĕклеççĕ. И.Я. Яковлев ыйтнипе Ф. Федоров, К. Ефимов, Г. Гаврилов сад ăстисем çĕр ытла тĕрлĕ йывăç хунавĕ лартаççĕ.

1902 çулта Атăл тăрăхне выçлăх çитет. И.Я. Яковлев ачасене шкулта вĕри апат çитерессине йĕркелет. Вăхăт малаллах шăвать. 1935-1937 çулсенче шкула сӳрекенсен йышĕ самай ӳсет, халĕ икĕ хутлă шкул çурчĕ çĕкленет. Çапла вара 7 çул вĕренмелли шкул пулса тăрать. 1956 çулта вăтам шкул йĕркелеççĕ. Турай шкулĕ чăн-чăн пĕлӳ центрĕ шутланать. Çакăнтан вĕренсе тухнă ачасем пысăк пĕлӳллĕ специалистсем пулса тăраççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ Чăваш Республикипех паллă çынсем.

Кунти паллă çынсенчен пĕри – Петр Николаевич Николаев. Вăл 20-ĕмĕрĕн 50-70-мĕш çулĕсенче тухнă чăваш букварĕн авторĕ. Турай шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Чăвашсен учитель шкулĕнче вĕренет. Ун хыççăн вара çӳлтен çӳле çĕкленет. Унăн пултарулăхне правительство наградисем çирĕплетеççĕ. 1957 çулта "Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ учителĕ" ята тивĕçет. Унăн икĕ пиччĕшĕ те вĕрентӳ ĕçĕнчех вăй хунă, пысăк хисепе тивĕçнĕ.

Паллах, ыттисене асăнса хăвармасăр та иртме çук пулĕ. Р.С. Кириллов 1969 çултанпа И.Я. Яковлев ячĕллĕ университетра аслă преподаватель, доцент, кайран философи кафедрин пуçлăхĕ пулса тăрăшать, тĕрлĕ шайри Хисепе тивĕçет. Вăл наукăпа методика ĕçне 90 ытла çырнă.

Кунтан вĕренсе тухнă ачасемпе пирĕн шкул чăннипех мухтанма пултарать. С.К. Киров "КамАЗ Автодор" УАО генеральнăй директорĕ пулса ĕçлет, Раççей шайĕнчи хисеп ятне тивĕçет. И.А. Александров ЧР Тава тивĕçлĕ артисчĕ, Чăваш патшалăх симфони капеллин солисчĕ пулса тăрăшать. Паллах, пур хисеплĕ çынсен ячĕсене асăнса та пĕтереймĕн, мĕншĕн тесен вĕсен йышĕ питĕ пысăк.

1982 çулта шкул коллективĕ пысăк юбилей кунне паллă тăвать, шкул йĕркеленнĕренпе 100 çул çитет. Çак тапхăра халалласа шкулта историпе краеведени музейĕ уçăлать.

1935-1937 çулсенче лартнă шкул çурчĕ самай кивелет. Пурнăç вара çĕнĕлле пурăнма хистет. Вăл вăхăтра ĕçленĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ В.И. Вязов, РОНО ертӳçи В.М. Васильев, Киров тата Суворов ячĕсем-пе хисепленекен хуçалăхсен ертӳçисем, шкул администрацийĕ йывăрлăхран тухмалли çул-йĕр шыраççĕ. Çапла вара 1997 çулта Турайри Культура çурчĕ çумне хушма шкул çурчĕ çĕклеме тĕв тăваççĕ. Ĕçе çакăн пек йĕркелени Чăваш Республикинче хăйне май çĕнĕлĕх пулнă. Çав вăхăтчен пĕр çуртрах шкулпа клуб пĕрле вырнаçни пулман-çке. Çапла вара вĕрентӳпе культура тата воспитани парас центр çурчĕ çĕкленет. Каярах, çак ырă тĕслĕхе тĕпе хурса, ытти çĕрте те çĕнĕлĕх вăя кĕме тытăнать. 1997 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче çĕнĕ центр уçăлать, унта Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров та хутшăнать.

Раççей тата Чăваш Ен Правительствин Президенчĕсем вĕрентӳ ĕçне пахалăхлăрах тăвассишĕн чылай тăрăшаççĕ. Эпир, шкулта ĕçлекенсем, çав тăрăшулăха "Вĕрентӳ" наци проектĕнче куратпăр. Унăн программисемпе килĕшӳллĕ тĕрлĕ хушма çĕнĕлĕх вăя кĕрет.

Çак шкул вара хăйĕн пĕрремĕш вырăнне паян та çухатман-ха. Вăл И.Я. Яковлев палăртнă çĕртех тĕпленнĕ. Халĕ ку шкулта çĕнĕлĕх хуçаланать.

300 вырăнлăх актовăй тата спорт залĕсем пур. Ачасене вĕри яшкапа апатланма 40 вырăнлăх столовăй тунă. Вулав пӳлĕмĕ те кĕнекесем-пе пуян. Ĕç урокĕ валли ятарлă мастерской йĕркеленĕ. Ачасене вара ытларах компьютер класĕ илĕртет, ăна та паянхи пурнăç ыйтăвĕсемпе туллин пуянлатнă. Çакăнта вĕренекенсем те, вĕрентекенсем те кирлĕ чухлĕ ĕçлеме пултараççĕ. 2004 çулта тĕрлĕ ялсенчен ачасене турттарма шкул автобусĕ парнелерĕç. Паянхи кун шкулта 22 учитель вăй хурать, вĕсенчен 9-шĕ çак шкултах пĕлӳ илнĕ.

Юлашки çулсенче вĕрентӳ ĕçĕн пахалăхĕ çӳллĕ шая çĕкленчĕ темелле. Кунта вĕренекенсем тăтăшах олимпиадăсене, наукăпа практика конференцийĕсене тата ытти конкурссене хутшăнаççĕ, район, республика шайĕнчи çĕнтерӳçĕсем пулса таврăнаççĕ. 2006-2007 вĕренӳ çулĕнче 25 вĕренекен тĕрлĕ олимпиадăна хутшăнчĕ. 11 класра вĕренекен Александр Алексеев 7 олимпиадăра ăс-тăн шайне тĕрĕслерĕ, вĕсенчен 4-шĕнче малти вырăнсене тухрĕ. Шкула вара кĕмĕл медальпе вĕçлерĕ. Çулсеренех кунта вĕренекенсем Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине тивĕçеççĕ.

Й. ИВАНОВА, Турай шкулĕн директор çумĕ.

Специалист канашĕ

Грипран сыхланăр

Кашни çулах кĕркуннехи-хĕллехи вăхăтра пирĕн республикăна никама систермесĕрех чĕнмен "хăна" – грипп чирĕ çитет. Пирĕн районта та çак чир анлăн сарăлать.

Кĕркунне çанталăк кунран-кун улшăнса тăрать: пĕрре сивĕтет, тепре ăшăтать. Çак çанталăк улшăнăвĕсем этемĕн организмĕ çинче уйрăмах палăраççĕ. Çын час-часах шăнать, шăнса пăсăлни вара сывлăш урлă инфекци чирĕсене аталанма пулăшать.

Грипп – сывлăш урлă ерекен чир, вăл кĕтмен çĕртен, ăнсăртран, çивĕччĕн пуçланать. Гриппа çын хăйĕн ĕмĕрĕ хушшинче темиçе хутчен те чирлеме пултарать. Чирлĕ çын калаçнă, ӳсĕрнĕ, сунаслана чухне сурчăк тумламĕсем-пе пĕрле грипп вирусĕсем ун таврал-ла саланаççĕ, лексе чирлеттереççĕ. Чылай чухне чир йывăррăн пуçланать: пуç ыратать, шăнтса пăрахать, ӳт-пӳ температури хăпарса каять: 38-40 градуса çитет, вăй чакать, типĕ ӳслĕк аптратать, сасă çухалма пултарать. Сăмсана сывлама йывăр, пуç ыратать, куççуль юхать, сыпăсем ыратаççĕ. 5-9 кун иртсен чирлĕ çын ыттисене чир ертмест, мĕншĕн тесен ку вăхăт тĕлне организм вирусран тасалса çитет. Грипран сипленнĕ чух чире ура çинче ирттермелле мар, вырăн çинче выртмалла, унсăрăн чир тарăна кайма пултарать. Нихăçан та харпăр хăй пĕлнĕ пек сипленмелле мар, чирлесен те тӳрех больницăна каймалла е йывăр пулсан – тухтăрсене киле чĕнмелле.

Чирлĕ çынна уйрăм пӳлĕме выртта-рмалла, ун пек тума май çук пулсан, кровате ширмăпа карса уйăрмалла. Гигиена япалисем, чашăк-тирĕк чирлĕ çыннăн уйрăм пулмалла. Пӳлĕме час-часах уçăлтармалла. Сывă çыннăн чирлĕ çынна пăхнă чухне сăмсапа тутана темиçе хут марльăран çĕленĕ маскăпа хупламалла. Вăхăтра сиплесен, грипп чирĕ 5-7 кунран иртет.

Гриппа чирлес мар тесен, эпидеми сарăлнă вăхăтра халăх йышлă пухăнакан вырăнсенче, тĕрлĕ мероприятисенче сахалтарах пулмалла. Эпидеми пуçланиччен грипран прививка туни çак чирпе чирлекенсен шутне 1,5-2 хутчен чакарать. Унсăр пуçне, чир паллисем пуçлансанах, çак препаратсем-пе усă курни пулăшать: оксолин маçĕ, интерферон, ремонтадин, арбидол, тĕрлĕ витаминсем, пан улми, груша, купăста, цитрус çимĕçĕсем, ыхрапа сухан питĕ усăллă. Паянхи куна районта грипп чирне тупса палăртман-ха, анчах та асăрханулăх нихăçан та пăсмасть.

Чирличчен чиртен упранни лайăхрах.

И. ВАСИЛЬЕВА, Çĕнĕ Шупашкарти гигиенăпа эпидемиологи центрĕн районти пайĕн врач-эпидемиолога пулăшаканĕ.

с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-13-80

Пĕлтерӳсем. Объявления

Моргаушская территориальная избирательная комиссия принимает предложения по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий избирательных участков №№ 524, 565 по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации пятого созыва до 20 ноября 2007 года.

УВАЖАЕМЫЕ ЖИТЕЛИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА!
КПКГ «Агрокредит» ждет вас по новому адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13. 1-10.

КПКГ «Агрокредит» выдает займы, принимает сбережения. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (здание Дома быта). Телефон: 2-18-13. 8-10.

Балконные рамы - 950 рублей кв. м.
Оконные блоки - от 2950 рублей кв. м.
Евроокна - от 4950 рублей кв. м.
Тел.: 8-905-343-11-70. 2-3.

Администрацией Моргаушского района планируется размещение базовой станции сотовой связи на земельном участке, расположенном примерно 185 м по направлению на северо-запад от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Калайкасы, ул. Молодёжная дом 3.

Замечания и предложения принимаются в кабинете 312 в здании администрации Моргаушского района в течении одного месяца. Телефон для справок: 2-12-66.

Требуется бухгалтер. Возраст 30-40 лет, стаж обязателен. Тел.: 8-960-308-64-34, 2-14-34. 2-2.

Калайкасси ялĕнче икĕ çăм арманĕ ĕçлет. Кану кунĕсĕр. Ирхи 7.00 сехетрен пуçласа. Ыйтса пĕлмелли тел.: 36-2-33, 8-905-347-21-35. 2-2.

Март уйăхĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-960-300-91-31. 1-3.

Куплю старинные монеты. Дорого. Село Тораево. Тел.: 8-910-388-01-61. 1-2.

Катькас, Ярапайкасси е Москакасси ял тăрăхĕсенчи ялсенче пурăнмалли кил-çурт туянатăп. Тел.: 8-917-655-45-72.

ООО «Энергосервис» срочно требуются рабочие в производственный цех (можно и женщины). Оплата сдельно-премиальная, не менее пяти тысяч рублей в месяц. Тел.: 8(241)60-2-39. Администрация.

Молодая семья из двух человек срочно снимет квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-905-028-08-17.

Халăхран лайăх хакпа вăкăр, тына, ĕне ашăн тата чĕрĕ виçепе пуçтаратпăр. Тел.: 8-909-304-08-81, 68-5-89.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства , из земель сельскохозяйственного назначения: без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:17 04 01:0050, местоположение: участок находится примерно в 473 м по направлению на юго-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Юдеркасы, д. 26, площадью 6200 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства , из земель сельскохозяйственного назначения: без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:28 07 02:0145, местоположение: участок находится примерно в 300 м по направлению на северо-восток от ориентира водонапорная башня, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, с. Тиуши южная часть, площадью 6000 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии следующих свободных земельных участков к распределению на правах аренды, без права строительства на нем:

1. Земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:02 06 01:0120, местоположение: участок находится примерно в 370 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, ул. Садовая, д. 42, площадью 6000 кв. м.

2. Земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:02 06 01:0119, местоположение: участок находится примерно в 450 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, ул. Садовая, д. 42, площадью 6200 кв. м.

3. Земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:02 06 01:0118, местоположение: участок находится примерно в 405 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, ул. Садовая, д. 42, площадью 6000 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Коллектив ОВД по Моргаушскому району выражает глубокое соболезнование заместителю начальника отдела-начальнику МОБ В.А. Григорьеву в связи с тяжелой утратой – смертью

МАТЕРИ.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3805. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 16.11.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру МАКАРОВА Р.А.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.